*С. Г. Васильева, 1 категориллĕ музыка ертӳçи,*
*Сĕнтĕрвăрри районĕн «Светлячок» ача сачĕ*

# Мăн кун

*(5 - 6 çулти ачасемпе ирттермелли чăваш уявĕн сценарийĕ)*

**Тĕллев:** ачасене чăвашсен авалхи уявĕпе, юмахĕпе, юрри-ваййисемпе паллаштарасси,

**Уяв юхăмĕ**

Музыка залне чăваш тĕррипе илемлетнĕ. Варринче пĕчĕк пӳрт ларать. Пӳрт умĕнче сак. Сак çинче ĕлĕкхи чăваш тумĕ тăхăннă Карчăк ларать, аллинче туя пур.

Илемлĕ чăваш кĕвви янăраса каять (П. Шоркин хут купăспа каланине электронлă мелпе çырса илни е хут купăсçă выляса утни илтĕнет).

Зал варрине хĕр ачапа арçын ача чупса кĕреççĕ.

**1 ача:**
Кĕçех йăва çиетпĕр,
Ыран пăтă çиетпĕр,
Кĕçех сĕрен теетпĕр,
Ыран Мăн кун теетпĕр.

**2 ача:**
Мăн кун пătти çиетпĕр,
Ыран яшка çиетпĕр.
Чир-чĕрсене татрăмăр,
Халĕ таса пурнатпăр.

**Карчăк:**
Ачасем, тавах сире, эсир мана манманшăн! Килсех çӳрĕр. Ваттисене пулăшни – ырă ĕç туни пулать. Ваттисен йăлисене те ан манăр, асрах тытăр.

Ачасем залран тухса каяççĕ те каялла вăйă картинче юрласа кĕреççĕ:

***«Хурăн çулçи»* юрă**

Хурăн çулçи, хурăн çулçи,
Хурăн çулçи çурăлсан,
Килет вăрман, килет вăрман,
Килет вăрман илемĕ.

«Çĕлен çулĕпе» утни.

Хĕрсем вăййа, хĕрсем вăййа,
Хĕрсем вăййа тухсассăн,
Килет урам, килет урам,
Килет урам илемĕ.

Çаврашкара утни.

Хурăн çулçи, хурăн çулçи,
Хурăн çулçи тăкăнсан,
Каять вăрман, каять вăрман,
Каять вăрман илемĕ.

Икĕ çаврашкара утни.

Хĕрсем вăйран, хĕрсем вăйран,
Хĕрсем вăйран кайсассăн,
Каять урам, каять урам,
Каять урам илемĕ.

Пĕр çаврашкара утни.

**Карчăк:**
Ачасем, килĕр-ха кунтарах! Ларăр сак çине юмах итлеме. Эпĕ сире Мăн кун мĕнле пулса кайни çинчен каласа парасшăн. Тимлĕ итлесе ларăр.

Авалхи чăвашсен уявĕсен шутне Мăн кун та кĕрет. Ачасем, пĕлетĕр-и эсир, мĕншĕн Мăн куна Аслă кун тенине? Итлесе ларăр, каласа паратăп сире!..

Пĕррехинче, кĕр кунĕсем иртсен, сивĕ хĕл çитнĕ. Усал Вупăр карчăкки хăйĕн тарçисене Хĕвеле сӳнтерме янă, тет. Лешсем вара Хĕвеле тапăнма пуçланă, тет! Ăна пĕлĕт çинчен туртса антарма шутланă. Хĕвел çав самантран пĕлĕт çине сайра хутра çеç улăхма пуçланă, тет.

Чăваш паттăрĕсем çут Хвеле пулăшма шутланă. Пĕр çĕр пин яш пуçтарăнса хĕвел тухăçне çул тытнă. Çичĕ кун та çичĕ каç çак паттăрсем Вупăр карчăкăн тарçисемпе çапăçнă, тет. Юлашкинчен, çĕнтернĕ, тет, çавсене. Вупăр карчăкки çĕр шăтăкне тарса пытаннă, тет те, шуйттан патшалăхĕнче хӳтлĕх тупнă, тет. Çут Хĕвеле чăваш паттăрĕсем тĕрланĕ сурпан çине хурса, чи çӳллĕ ту çине улăхса, пĕлĕт çине хунă, тет.

Хĕвел вара питĕ хĕпĕртесе, татах та çутăрах ялкăшса , пурне те савăнтарса кашни кунах пĕлĕт çине тухма пуçланă, тет. Кăвак пĕлĕтре ылтăн Хĕвел кăлтăрмач пек куса çӳреме тытăннă, тет.

Вăт, ачасем, çут Хĕвеле ятарласа хисеплесе, авалхи чăвашсем Мăн куна уявлама пуçланă. Эпир те сирĕнпе паян çут Хĕвеле пуç таятпăр (ачасем Карчăкпа пĕрле хĕвеле пуç таяççĕ).

**3 ача:**
Чĕвĕл чĕкеçсем, çепĕç шăпчăксем
Савăнса юрлаç янкăр ирхине.
Хастар каччăсен, çамрăк пикесен
Çурхи хĕвеле кĕтсе илмелле.

Ачасем, атьăр хире хирĕç алла аллăн тытăнса тăрар та тепĕр вăйă выляр!

***«Çерем ватса вир акрăм»*** **юрă-вăйă**
Çерем ватса вир акрăм. *
Эпир ăна, эпир ăна таптатпăр.

Эсир мĕнпе таптатăр?
Кĕтӳ кĕртсе, кĕтӳ кĕртсе таптатпăр.

Эпир ăна тытатпăр.
Эсир мĕнпе, эсир мĕнпе тытатăр?

Чĕн йĕвенпе тытатпăр.
Эпир ăна, эпир ăна илетпĕр.

Эсир мĕнпе илетĕр?
Çĕр сумм парса, çĕр сум парса илетпĕр.

Пире çĕр сум кирлĕ мар.
Сире вара, сире вара кам кирлĕ?

Пире кирлĕ, хĕр кирлĕ.
Мĕнле ятлă, мĕнле ятлă хĕр кирлĕ?

(* Кашни йĕркене икĕ хут юрламалла.)

Хăш ача ячĕ тухнă, çав ача хирĕç тăракан ачасем патне хыттăн чупса кайса «карта» витĕр тухнă. Тухайман пулсан, ăна хăйне тытса юлнă. Вăййа темиçе хут та вылянă.

**Карчăк:**
Маттур, маттур, ачасем! Эпĕ те çамрăк чух вăййа тухаттăм, юрă-ташă пуçлаттăм. Халĕ ватăлтăм ĕнтĕ.

**4 ача:**
Пирĕн урам варринче
Утмăл ача, çитмĕл хĕр.
Утмăлăш те япăх мар,
Çитмĕлĕш те чапсăр мар.

**5 ача:**
Симĕс калча,
Симĕс укăлча.
Йыхăрать вăййа
Сарă хĕр ача.

**6 ача:**
Мăн кун, Мăн кун терĕмĕр,
Мăн кун, Мăн кун терĕмĕр,

Мăн кун паян çитрĕ те.
Мăн кун пăтти çийĕпĕр,
Мăн кун вăййи выльăпăр!

Ачасем зал йĕри-тавра çаврăнса пӳрт умĕнчи сак çине пырса лараççĕ.

**Карчăк:**
Ларăр, ларăр, хаклă ачасем! Хĕр ачасене маларах ирттерĕр, вара кăçал манăн та выльăх-чĕрлĕх карта тулли пулĕ. Пĕлетĕр-и, ачасем, эпир çамрăк чух «Çĕрĕлле» выляттăмăр. Кам та кам тимлĕ пулать – çĕрĕ камра пулнине тӳрех асăрхать.

Камăн аллинче çĕрĕ пулать, çав ача ташлама тухать. Анчах та вăл пĕччен ташламасть, пурне те пĕрле ташлама кăларать. Пурте такмакласа ташлаççĕ.

**7 ача:**
Вылярăмăр, култăмăр,
Питĕ маттур пултăмăр.
Вăхăт кăнтăр еннелле,
Атте-анне килнелле.

**8 ача:**
Сурăх-така мак(ă)рать пуль,
Кантăкранах пăхать пуль.
Кантăкранах пăхать пуль,
Хуçи килмест теет пуль.

Ачасем Карчăка юмахшăн та, çĕнĕ вăйăшăн та тав сăмахĕсем калаççĕ. Унтан алла-аллăн тытăнса, карталанса юрла-юрла урам тăрăх утса каяççĕ.

***«Урам аякки»* юрă**

Урам аякки к(ă)вак çеçке* те,
Тай(ă)ла, тай(ă)ла татар-и те,
Тай(ă)ла, тай(ă)ла татар-и.

Атьăр, хĕрсем, анаталла!* та,
Симĕс курăк таптаса та,
Симĕс курăк таптаса.

Яш каччăсем пăхса юлччăр!*
Карта çине тайăнса та,
Карта çине тайăнса.

Юрлăр, хĕрсем, юрлăр, хĕрсем те,
Юрлăр, хĕрсем, юрлăр, хĕрсем!

Ак çакăнта юрланисем
Асăмра юлать, хĕрсем*.

Урам аякки к(ă)вак çеçке* те,
Тай(ă)ла, тай(ă)ла татар-и те,
Тай(ă)ла, тай(ă)ла татар-и.

**Карчăк** ачасем юрласа утнине пăхса юлать, тарăн шухăша каять. Унтан туйине тытса майĕпен тăрать те пўртне кĕрсе каять.

Вĕçĕ.